Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

64 (7595) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи августăн (çурла) 27-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Вырма – 2008**

## Тав сăмахĕ – вырма вĕçленĕ ятпа

*Çĕр ĕçĕнче хĕрӳ ĕç пырать: хресчен иртен пуçласа мĕн каçченех вырмара. Муркашсем хăйсен умĕнчи тивĕçне çӳллĕ шайра пурнăçланине республикăри оперативлă кăтарту та çирĕплетет. Паянхи куна тĕш-тырăпа пăрça йышши культурăсем выраccипе эпир хамăр кӳршĕсенчен маларах тăратпăр тата республикăра та малтисен ретĕнче. Çакнашкал кăтарту вăл эпир вырмана тĕплĕ хатĕрленнине пĕлтерет. Халĕ ырă хыпар: иртнĕ кунсенче районти икĕ хуçалăх – Михаил Николаевич Шишокин ертсе пыракан «Восток» тата Юрий Николаевич Шишокин ертсе пыракан «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕсем – вырма ĕçĕсене вĕçлерĕç. Хресчен (фермер) хуçалăхĕсем те ырăпа палăрчĕç çак кунсенче. Акă А. Толстовпа А. Матвеев ертсе пыракан хресчен (фермер) хуçалăхĕсем те иртнĕ кунсенче вырма ĕçĕсене вĕçлерĕç. Çак хуçалăхсен ертӳçисемпе специалисчĕсене, вырмара ĕçленĕ механизаторĕсемпе уй-хир бригадисен ĕçченĕсене ăнăçлă ĕçшĕн чĕререн саламлатăн, тав тăватăн. Вырма ĕçĕсене ăнăçлă хатĕрленнĕ тата пĕлсе йĕркеленĕ Е. Андреев яч. хис., Ильич яч. хис., «Герой», «Свобода», «Ударник» пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе В. Бархаткин, В. Гаврилов хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче те вырма вĕçленсе пыни савăнтарать. Вĕсене кура К. Иванов яч. хис., Чапаев яч. хис., Мичурин яч. хис., «Хлебороб», «Рассвет» хуçалăхсем те ытларах туртăнса ĕçлессе шанатăн.*

*Вырма вĕçленнипех ял хуçалăхĕнче кĕрхи ĕçсем пĕтмеççĕ-ха. Умра – çĕр улми, тымар çимĕçпе пахча çимĕç пухса кĕртмелли ответлă тапхăр. Вĕсемпе пĕрлех çитес çулхи тухăçшăн кĕрешсе кĕр аки вăхăтра акса хăварасси малти вырăна тухать. Паян ку енĕпе «Восток», «Оринино», «Ударник», Суворов яч. хис., Ильич яч. хис. хуçалăхсем агротехнологие пăхăнса ĕçлеççĕ. Ку савăнтарать, ыттисене те ĕçсене хăвăртлатма ыйтать.*

**Район пуçлăхĕ
Ю. ИВАНОВ.**



**РАЙОН УЙ-ХИРĔСЕНЧЕ**

**– Августăн 26-мĕшĕ тĕлне районти хуçалăхсем тĕш-тырăпа пăрça йышши культурăсене 9148 гектар çинчен (68,1 процент) пуçтарса кĕртнĕ, 5 пин гектара яхăн хирсене улăмран тасатнă.**

**– Хуçалăхсем 21743 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ.**

**– Кĕрхи культурăсене 6800 гектар çинче акма планланă пулсан, ака ĕçне хальлĕхе 5 хуçалăх кӳлĕннĕ. Вĕсем 400 гектар ытла кĕртрисем акнă. Ку ĕçсем кунсерен вăй илсе пыраççĕ.**

**Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче**

## Ĕçсем малалла пыраççĕ

Кĕçех авăн уйăхне кĕретпĕр. Вăхăт кĕр енне кайнă май çанталăкран ырри-не кĕтни çеç çителĕксĕр. Уяр та ăшă кунсен кашни сехечĕпе туллин те вăр-вар усă курнин пĕлтерĕшĕ паян ылтăн пекех хаклă. Çакна çĕр ĕçĕнче ĕçлекен аван ăнланать. Ăнланать те хăйĕнчен мĕн килнине пĕтĕмпех тума тăрăшать. Хĕл кунĕ тутă пултăр тесен паян юптаруri пек юрласа-ташласа çеç çӳрени çителĕксĕр.

– Пур-çук вăйсене пĕрлештерсе çанă тавăрса ĕçлемелле паян. Ахальлĕн кая юлатпăр. Ун чух вара чавса çывăх та... Йăлтах асăрхаттарупа калаçас килмест. Эпир вăл асăрхаттарусене кая хăвартăмăр ĕнтĕ. Хуçалăх ĕçченĕсемпе пĕр çын пек ĕçлесе иртнĕ вырсарни кун кăçалхи вырма ĕçĕсене вĕçлерĕмĕр. Тӳрех калатăп, ăнса пулнă тыр-пула пĕрлехи вăйпа виçĕ эрнере пуçтарса кĕртрĕмĕр. Тухăç та иртнĕ çулхинчен икĕ хут ытларах пулчĕ, – кăмăллăн каласа парать «Восток» хуçалăх ертӳçи Михаил Николаевич йĕтем çинчи тырăпа киленсе.

Ю. Ивановпа Н. Бычков, В. Ефремовпа В. Андреев, В. Дмитриевпа Н. Николаев механизаторсен экипажĕсем çак тапхăрта тырă пуссисенче кал-кал ĕçлерĕç. Пĕрремĕш экипаж 267 тонна тырă çапса тĕшĕлени те пысăк ӳсĕм. Хиртен йĕтем çине тырă турттарнă çĕрте вара Владислав Сергеевич Кузов водитель палăрчĕ. Вăл пĕчченех 264 тонна тырăна йĕтем çине илсе кĕчĕ.

– Хуçалăхра 18 çул водительте ĕçлетĕп. Кашни çул майлах вырмара. Кăçал тырри ăнса пулни тулли вăйпа ĕçлеме хавхалантарчĕ, – терĕ паян кĕр аки валли хире вăрлăх турттаракан В. Кузов.

Тырăран пушаннă хирсенче кĕрхи культурăсем акнипе пĕрлех улăм пуçтарассипе те юлашки ĕçсем пыраççĕ. Д. Быков механизатор туртса панă улăма А. Пушкин çийĕнчех ура çине парать.

– Эпир кунта ĕçлеме кӳршĕ хуçалăхран килтĕмĕр. Ĕçлесе илме майĕ пур. Ĕç укçине тӳлеççĕ, ĕçленишĕн улăмне парса та ĕнтĕ. Тырри те пулать. Ялта пурăнакана килти хушма хуçалăха тытма урăх мĕн кирлĕ-ха тата? – кăмăллăн калаçать Г. Мухарова. – Уйсенче 60 ытла улăм ури турăмăр та ĕнтĕ.

Çак вăхăтра пирĕнпе юнашар пĕрер сеялкăллă икĕ МТЗ-82 чарăнчĕ. Кусем Сергей Наумовпа Алексей Артемьев механизаторсем пулчĕç.

– Вырма хыççăнах çĕр сухаласси вăй илсе пынăран акма палăртнă 150 гектар çĕр хатĕрпе пĕрех ĕнтĕ. Кунта паян П. Вениаминов ДТ-75 тракторĕпе юлашки хатĕрлев ĕçĕсем ирттерет. Эпир вара 5-мĕш кун акара. Ума лартнă тĕллеве пурнăçлатпăрах тесе тăрăшатпăр. Çакна валли условисем пур, – терĕç пĕр саслăн С. Наумовпа А. Артемьев.

...Тракторсем тырă-пулăран тасалнă уйсене васкарĕç.

**Анатолий БЕЛОВ.
Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**



**М.Н. Шишокин кăçалхи тырă тухăçĕпе кăмăллă.**



**Вырма паттăрĕсенчен пĕри – В. С. Кузов водитель.**




**Хирти улăма урана хывакан механизаторсем Д. Быковпа А. Пушкин.**



**Тырăран пушаннă хирсенчи улăм урисем.**

**Республикăра**

## Умра – пысăк ĕçсем

Августăн 25-мĕшĕнче ЧР Президенчĕ Николай Федоров правительство членĕсемпе тата федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.

Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланас умĕн вĕрентӳ учрежденийĕсене авăнăн 1-мĕшĕ тĕлне хатĕрлессипе çыхăннă ыйтусемпе вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министрĕ Галина Чернова паллаштарнă. Министр пĕлтернĕ тăрăх, çак вăхăта комиссисем республикăри шкулсен 99 процентне йышăннă. Ку ĕç çывăх кунсенче вĕçленĕ.Çурла уйăхĕнчи йăлана кĕнĕ педсоветсен те халĕ çĕнĕ формат. Иртнĕ эрнере вĕрентекен-новаторсем мастер-классем ирттернĕ. Çакă пĕр-пĕрин опычĕпе паллашма, професси пĕлĕвĕпе хăнăхăва çирĕплетме пулăшнă.

Президент çамрăксем професси суйласа илессипе, ĕçлев рынокĕнчи лару-тăрупа çыхăннă ыйтусен çивĕчлĕхне уйрăммăн палăртнă. Ку ыйтусене педагогсен республика шайĕнчи конференцийĕнче те, вĕрентекенсемпе ашшĕ-амăшĕсен тĕл пулăвĕсенче те тишкермелле.

Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев вырма ĕçĕсемпе паллаштарнă.

Канашлура çавăн пекех Чăваш Енĕн социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн ытти ыйтăвĕсене те пăхса тухнă.

**Учительсен августри конференцийĕ**

## Вĕрентӳ ĕçĕн актуаллă ыйтăвĕсем

Ĕнер, августăн 26-мĕшĕнче, районти учительсен йăлана кĕнĕ августри конференцийĕ пулчĕ. Кăçал вăл район администрацийĕн ларусен залĕнче иртрĕ.

Малтанах вĕрентекенсем инновациллĕ вĕрентӳ программисемпе ĕçлесе пыракан Раççей тата республика шайĕсенчи конкурссенче çĕнтернĕ шкулсем çинчен хатĕрленĕ презентаципе паллашрĕç. Ун хыççăн районти историпе краеведени музейĕнче пулчĕç тата «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн хăтлă залĕсене курса çаврăнчĕç.

Пленарлă пайри докладсем вара вĕрентӳри çивĕч ыйтусем тавра пулчĕç. Малтанах район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов паянхи шкулсем умĕнче тăракан ыйтусем тата вĕсен малашлăхĕ пирки тухса калаçрĕ. Вĕрентӳ ĕçĕнчи тĕп задачăсем пирки вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи Л.И. Мочалов хăйĕн докладĕнче каларĕ. Паянхи кун питĕ вырăнлă ыйтусенчен пĕрин çинче – творчествăлла ĕçлекен учительсене хавхалантарасси çинче Муркашри вăтам шкулта пуçламăш классене вĕрентекен В.В. Смирнова чарăнса тăчĕ. Çакăнпа çыхăннă тепĕр ыйтупа – «Вĕрентӳ ĕçне патшалăхпа общество енчен ертсе пырасси» темăпа – Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкулăн ертсе пыракан канашăн ертӳçи В.И. Кожанов тухса калаçрĕ. Çавăн пекех Калайкассинчи вăтам шкул директорĕн ĕçĕсене пурнăçласа пыракан А.М. Степанов, «Мечта» ача сачĕн ертӳçи Г.А. Шолкова, çамрăк техниксен станцийĕн директорĕ А.В. Андреев тата районти шалти ĕçсен пайĕн çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен подразделенийĕн пуçлăхĕ В.М. Максимов та учительсене паян хумхантаракан ыйтусемпе тухса калаçрĕç.

Иртнĕ вĕренӳ çулне пĕтĕмлетсе вĕрентӳ ĕçĕнче çитĕнӳсем тунисене Хисеп грамотисем парса чысларĕç, концертпа саламларĕç.

Тĕплĕнрех канашлу пирки хаçатăн çитес номерĕнче вуласа пĕлме пултаратăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Ырă кăмăллăх**

## Ют инкек пулмасть

Кăнтăр Осети халăхне йывăр лару-тăрура пирĕн район çыннисем пулăшни çинчен эпир тăтăшах пĕлтеретпĕр. Муркашсем çав инкеке ăнланни, ăна çывăха илни вĕсен пулăшăвĕнче те палăрать.

Район пуçлăхĕн çумĕ – культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева пĕлтернĕ тăрăх, августăн 25-мĕшĕ тĕлне гуманитари пулăшăвĕ пама кăмăл тунисен хисепĕ, вĕсем паракан пулăшу тата пысăкланнă. Сăмахран, çак кунсенче «ВИТА» чикĕллĕ яваплăхлă общество 25 михĕ цемент, Муркаш райповĕ 20 курупка сухари парса пулăшнă. Пирĕн район пулăшу памалли ятарлă счет çине 47600 тенкĕ укçа куçарнă. Вĕсенчен 21 пин тенкине район администрацийĕнче ĕçлекенсем, 5 пинне – «Моргаушская» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ куçарса панă.

Кăнтăр Осети халăхне пулăшу парасси малалла пырать.

**Юбилей**

### *Саламлатпăр*



Мăн Хураçкара пурăнакан чи хаклă та юратнă çыннăмăра – **Серафима Федоровна ЕГОРОВАНА** 80 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Эпир санăн кун-çулна алă тупанĕ çинчи пекех курса тăратпăр. Çăмăл пулман сана пурнăçăн анлă çулĕпе утма. Хăвăрт иртекен кун-çулта эсĕ хура-шурне сахал мар курнă: çĕр-шыври выçлăх çулĕсене пĕрре мар чăтса ирттернĕ, ачаллах сĕм тăлăха юлса хуçалăх ферминче ĕçлесе пурнăç çулĕ çине тухнă, хаяр вăрçă çулĕсенчи йывăрлăхсене хыçа хăварнă, çемье çавăрса ача çуратнă. Тунă ӳсĕмсемпе, тăванусемпе йĕркеленнĕ çирĕп хутшăнусемпе малалла татах нумай çул киленсе пурăнма çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕ, кĕрĕвĕ, виçĕ мăнукĕ, кӳршисем, тăванĕсем.**